К 83.36
В 55
4-43850

КЛАВДИЯ ВИШНЕВСКАЯ

# *КИРЛӖ ÇИВӖЧ САНАРСЕМ*

## НЕОБХОДИМЫЕ ОСТРЫЕ ОБРАЗЫ

Критика

Шупашкар
2007

Национальная библиотека ЧР
4-043850

ББК 83.3 (2 Рос. Рус) – 6
В 55

К. И. Вишневская. Необходимые острые образы. Кирлӗ ҫивӗч сӑнарсем. Сборник критических статей. Критика статьисен пуххи. – Чебоксары, 2007. Книга №3.

© К.И. Вишневская, 2007

Проверено 27 МАР 2017

И-43850

Национальная библиотека

Обязат экз.
К83.3б
В55

Клавдия Вишневская

# Кирлĕ çивĕч сăнарсем

## Необходимые острые образы

*Сборник критических статей*

*Критика статьисен пуххи*

3-мĕш кĕнеке

*На русском и чувашском языках*

Шупашкар – 2007

## Тумлампа танлаштарнă кăмăл

Зоя Алексеева «Тумлам пек тăлăх кăмăл» ятлă сăвă кĕнекипе сăвăçсен ретне хăюллăн утăмласа мар, ăмăртмалла чупса кĕчĕ тейĕн. Черчен те, çав вăхăтрах паттăр та хăюллă, ĕçчен те сăпайлă çамрăк хĕрарăм сăвă хыççăн сăвă шăрантарни тумлам евĕрлех темелле. Çумăр тумламĕ те пухас пулсан ҫуҫтарăнать, Зоя çыравçăн та сăввисем пухăнсах пыраççĕ. Çулталăк каялла çеç илтнĕччĕ ун ятне, унтанпа нумаях та вăхăт иртмерĕ, çак хĕрарăмпа пĕр сĕтел хушшинче ларма тӳр килчĕ. Акă вăл чăтăмсăррăн вулать хăйĕн сăввине. Сăмах хыççăн сăмах, вăл хăш вăхăтра сывлани сисĕнмест. Вуласа пĕтерсен сывлăш çавăрса илчĕ те хуйхăллăн пусăрăнчĕ. Ун чухне вуланă сăвă техники поэзи картне кĕменччĕ: рифмине те таçта шалта пытарса усранăн, ритмине те кĕвĕ картин тулашне хăварнăн, шухăшне сапаланăн – произведени чухăн курăнать, анчах çавăнтах сăвă сăнарĕн пахалăхне асăрхарăм та «...йĕп çăрти çине...» тени ман пуçра çырăнса юлчĕ.

Вăхăт самаях иртсен, пĕр -икĕ çултан, сăвăç сăввисене «Тăван Атăл» журналта куратăп. Акă вăл пиçсе çитнĕ шухăшлă сăнар. Ăна вăл шăрçа пек илемлетнĕ. Паллах, сăнарĕ те илемленнĕ, пуянланнă. Параллельлĕх тата чĕрĕлĕх мелĕсемпе усă курса шухăша сăнарланă сăвăсем журналти страницăна илемлетеççĕ.

пачах нумай .енлĕ темăпа çырать. Пĕрремĕш пĕчĕк кĕнеке япăх пулмарĕ пулсан, пуласси татах та аванрах пулĕ тесе шанас килет. Халлĕхе кашни сăвви чиперкке пек виçевлĕ: сăнарлă, шухăшлă тата илĕртӳллĕ: юрату пек кăмăллă. 07. 2005ç.

## Шĕкĕ шăхăрсан

Ырă ĕç патне туртăнакансем нумайăн пулин те, ыррине çеç тума пурне те пӳрмен. Ырă тума ырă чун кирлĕ. Ăна вара чухăнлăхра упрама йывăр. Анчах укçа пăсать чуна тенине халь ĕненес те килмест. Анатолий Кипеч вара пуянра ырăлăх курать. Акă ăна мĕнле ĕнетерет вăл «Ехрем хуçа» мелодраминче.

Усал – хура ĕç тума питех те йывăррине кăтартса парать унта автор. Пьесăри пуян Флегент Николаевич текенни пуян Ехреме ăмсанма пуçланăранпах канăçне çухатать. Темиçе çын аллипе усă курса унăн çĕрне туртса илес килнине те пытармасть. «Манăн çĕр Ехрем йышăнакан вырăнта пулмалла» тесе калама та именмест вăл юлашкинчен. Усал тăваканра шĕкĕ шăхăрать иккен: вăл çынна канăç памасть, чунне çисех тăрать. Анчах Ехрем ун пек киревсĕрлĕхсемпе çыхланма та шутламасть. Унăн чи кирли – ĕçе яланах ăнтарса пыни тата тупăшне пĕлсе усă курни. Çавăн пекех май кирлĕ таран хăйĕн ачисене тĕрĕс çул çине кăларса, ырă ĕç тума тĕслĕх кăтартса пырать. Тăвата ывăлĕпе пĕр хĕрне ӳстернисĕр пуçне

ялти тăлăх Ванюша вĕрентсе кăлармa сăмах парть çеç мар, ăна хăй килĕнче ачисемпе пĕрле усраса пурăнăç этикине алла илме пулăшать. Çак ĕçре унăн мăшăрĕ те хутшăнать. Вырăс хĕрарăмĕ чăваш ĕçчен Ехремне хăйĕнчен ытла шута хурать: Хăй чирлине пăхмасăрах ачисем ашшĕне ан хурлантарччăр тесе вĕсемпе канашласах тăрать. Кĕçĕнни Федя Ванюшпа туслашни ăна савăнтарать, мĕншĕн тесен ӳссе çитейменни – вăл кăна ют ачана ăнланмасран шикленни те пулнах ĕнтĕ. Килтисенчен пĕрин кĕвĕç килес пулсан та, теприсем ăна вăхăтра чарса лартма, тĕрĕс ăнлантарма пултарнă. Çапла вара Ванюш Ехрем пуян патĕнче хăй ӳссен кам пулассине те пĕлет:

– Паллах, ытти ачисем пекех, эпĕ те Ехрем хуçа пулатăп, – тет. Кун пек калама сăлтавĕ пысăк унăн. Вăл та унта пурăнать, тата ăна хисеплеççĕ, ялти ачалăха аса илсе яла таврăнас килнине те хăйĕн пуласлăхĕпе лăплантарать. Яла кайсан, вăл никам та пулас маррине пĕлсе хăварнă ăна Янтуш мучи. Халĕ Ванюш ӳссен «Ехрем хуçа пулатăп» – çапла калать вăл пурне те. Ырă пуян ял ачине чунтан килĕшет, çавăнпа та хăй те çапла пуласса ĕненет вăл. Малтанах Ванюш Ехрем хуçа ачисем кăна пулаççĕ пуль тесе шухăшлать. Пурнарахпа хăнăхнă май, ырлăха кĕрсе ӳкнипе, хăй те Ехрем хуçа пек пулассишĕн иккеленмест, мĕншĕн тесен пуянăн ывăлĕсем купца ĕçĕсене алла иле пуçланă, вĕсене

пурне те çапла чĕнеççĕ. Николайпа Сергей те ашшĕ пекех ырă пулнине курать, вĕсем пурте амăшне хисеплесе итлеççĕ.

Чи сăнарлă самантсем – икĕ пуян епле ĕçпе çыхăнни. Пĕр пуянĕ Ялан çăхавпа Ехреме ĕçлеме чăрмантарса çÿрет, Ехрем вара ĕçлет те ĕçлет ачисемпе. Вăл кĕвĕç чунлă пуянран чухăнсене пулăшнипе уйрăлса тăрать. Уйрăмах хăй чăваш пулнине пытармасăр ытти чăвашсене ура çине тăма, вĕренме, ялсенче чиркÿ, шкул уçма укçа уйăрса парать.

Хусан Кĕпĕрнинчен курма килет пĕр «паллăраххи» , вăл чăваш пуянĕ мĕнле пуръннипе тата ачисемпе паллашать. Рая хĕрĕ чипер çеç мар, кăмăллă та ĕçчен, ăслă пулни ăна çав тери килĕшет. Вăл малтанах хăйне чĕлхесĕр пек тыткалать. Ăна паллă режиссер В. Оринов вĕсен хутшăнăвне самолетлă çыру вĕçтерсе илемлетнĕ. Сăнарлă самант питех те кăмăллă та хаваслă пулса тухнă. С. Семенова çамрăк артистка ĕçне те кунта мухтамалли çеç юлать. Вăл чăн-чăн пуян пики тейĕн: вăл сассине профессиллĕ шайра лартса юрлама тата фортепьянăпа калама пултарни куракансен кăмăлне çĕклет, сценăна илемлетет, пике сăнарне те юрланине татах та пуянлатса уçăмлатать.

Ку ÿкерчĕкре автор каллех хĕр ашшĕ пек ырă ĕç тума ырă çул суйласа илнине кăтартать. Вăл, халь кăна шкул пĕтернĕскер, укçа тăваймасть-ха. Ашшĕ валли вара пурпĕрех хаклă парне хатĕрлет – пĕчĕк

к ачасене пуçтарса юрлама вĕрентсе ĕлкĕрнĕ юррине пĕчĕк хорпа юрласа параççĕ.

Çавăн пекех пьесăра хирĕçӳлĕхсем те сахал мар. Çыравçă ăна танлаштару мелĕпе шăнăрланă пирки вĕсен çемйисем те çавăн пек мелпех ӳкерĕннĕ. Ехрем хуçан ырă енĕпе кăна палăраççĕ пулсан, тепĕр хирĕçле çемйери пуянăн пики хăй савакан Ехрем ывăлне пуянлăх пайласах – хирĕççех авланма хушать. Анчах Николай пикене темĕнле юратсан та ашшĕне кӳрентерме хăяймасть. Вăл вара ырă çул шыраса, ашшĕн çуралнă кунне хăйĕн савни тĕрленĕ шупăра парне пултăр тесе пикерен йышăнма ыйтать. Çак çураçу сăнарĕпе килĕшӳ кĕперĕ хывăнать те пĕр-пĕрне тăшман пек куракан пуянсен.

Режиссерпа автор нумай ĕçлени куçкĕрет. Уйрăмах çамрăк яш артистсем:
тӳрех тилхепе тытни те сисĕнет. Ирĕклĕн те хăюллăн выляма, хăвăн хуçу умĕнче персонажсене сăнарланма йывăр пулин те, пурте аван выляççĕ. Режиссер йышăнса кĕртнĕ выляв пайĕсен пайрăмĕсене вĕсем килĕштерни, ăспа чуна вырнаçтарни мелодрама шухăшне вичкĕнлетме, сăнарсене çивĕчлетме пулăшть. Çавăн пекех çак юрра пуян хуçа юрлани
те тарăн шухăша путарать куракансене: юрри чаплă чухăншăн, чуна пусармалли пек, пуяншăн мĕнле-ши? Калама хĕн. Тен, пуян пулса курсан ăнланма та пулать пуль. Хуйхи Ехрем пуяна та

çителĕклех лекнĕ. Юрри те чухăнсенни пекех.

Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать,
Юхса кайма торпас мар.
Ларса юлма шор чол мар...
Пире те валли парне çок,
Парне полма ыр çын мар...

21- 10-2005ç.

## «Çутă шанчăкăн хĕлхемĕ»

Математикăпа туслă чун яланах тĕрĕс те ăслă тата йăвашшăн калаçать. Чунĕ те çутă та таса ун пек çынсен. Шăпах çавăн пек çынсем литературăпа чĕлхе енне туртăнса хăйсен шухăшĕсене палăртаççĕ. Самарăри Владимир Левуков та çаплах. Ăшă кăмăллă сăввисем тӳрех чуна тыткăнлаççĕ. «Кун илемĕ» черетлĕ кĕнекине илес пулсан та çавнах каламалла. Илер-ха «Савăнăç» сăвва, ку пуçлав пулин те çăмăллăн, йĕлтĕрпе хăй мĕнле каять, чунĕ епле уçă та таса, çавăн пекех сăвă йĕркисем те илĕртӳллĕн, виçеллĕн вуланаççĕ. Чи кирли – унти шухăша ăнланмалла уçса пани:

Тумланатăп хăпăл-хапăл,
Ыткăнатăп урама.
Çăмăл йĕлтĕре сыратăп
Çĕнĕ йĕр туса шума.

Çапла пуçласа ĕçлеме пултаракан çыравçă

хăйĕн ĕçĕпе туллин паллаштарать. Сăвă темисене илес пулсан та тĕрлĕ енлĕ. Акă епле сăнарлать аннене.

Тăнăç, хӳтлĕх, çураçулăх –
Çак чи çепĕç сăмахра.
Вăл кӳрсе тăрать татулăх
Пирĕн пурнăçăмăра.

«Шанчăк» сăвва вăл танлаштару мелĕпе сăнарланă.

Шанчăксăр çинчен калатпăр:
Вăл тăмасть çур çын тĕшне.
Сăнчăрпа танлаштаратпăр
Шанчăклă юлташсене.

Вĕрентсе каласси те сисĕнет çĕнĕ автортă. «Çемье илемĕ» сăвă çамрăк мăшăрсене хистемесĕр, ырă кăмăлпа, сăрăхтарса, мĕнле пулсан аван пулмаллине шахвăртса сăнарлать.

Пĕр пек ăшшăн чысласан
Ик енчи тăвана...

Вĕсем тата килĕштерсе çурт-йĕр пĕрле çавăрсан, йăх ӳстерме илем çеç мар, ырра вĕрентме те кирлĕ мар, вăл теприне курса хăех çапла пулса пымалла.

Владимир Левуков сăввисем ытларах сăваллă прозăна аса илтереççĕ. Çавăнпа та унта мĕн пулса иртнине каласа парассипе çыхăннă. Сăввăри ĕç-пулăм çаврăмсемпе кĕвĕленсе, кĕвĕ виçине пăхăнса тăрать. Ваттисен сăмахĕсенчен сăвă ярăмĕ ăсталанă. Ку та – хăйне евĕр шырав меслечĕ.

Çур çухатать, кĕр пуйтарать.

Кĕр кун пурте кĕрекере.
Ват çын тăват çынна тăрать.
Ват çын пехилĕ – ĕмĕре.

Поэзине кĕрсен ĕçлемелли сахал мар, ăнланать ăна çамрăк автор. Çĕнĕ çул шырасси çеç мар, тĕрлĕрен сăнар тăвасси те çăмăл мар. В. Левуков тепĕр чухне сăвва чĕрĕлетме тӳрĕ пуплевсемпе те усă курать. Алла илнĕ мелсемпе усă курса «Сĕнче» поэма çырать. Кĕвĕллĕ куплетсем такăнмасăр вуланаççĕ, автор мĕн калас тенине уçса пара ççĕ. Çапла вара малтанхи утăм вуланчĕ, кайранхишĕн те тăрăшасса шанас килет.

2006ç.

## *Калăплă калавсемпе трагеди*

Философи наукисен докторĕ Н. Исмуков

К. Вишневская хăйне евĕр поэт пулни палăрнăччĕ ĕнтĕ 1980 çулсенчех. Ун хыççăнах калав «Шăпа «Тăван Атăл» журналта кун çути курчĕ. Ялтан килнĕ çамрăк пикесене асăрхаттарса та вĕрентсе калама пĕлнĕ пек туйăнчĕ çак калава вуланă хыççăнах. Çамрăк автор хăйне çырас енчен самаях туптарĕ унтанпа. Калăплă кĕнекисем пĕчĕкшерĕн кун çути курма пуçларĕç.

Акă ман умра К. Вишневскаян тепĕр кĕнеке ярăмĕ выртать. Автор кашни ĕçе тирпейлесе çитренĕ пулин те курăнманни юласран шикленет. Тупĕр куçпа пăхтарас килет унăн хăйĕн ĕçĕсене. Пĕр критикĕ ырă сĕнӳсем панă, тепри вуласа хакланă, виççĕмĕшĕ – эпĕ, килĕшнĕ япалана çырсах тишкерес терĕм.

«Вĕре çĕлен» тăвата пайлă трагеди. Кун пек кăткăс ĕçе пиççе çитнĕ классиксем çыраççĕ. Клавдия Ивановна та çирĕм çул вырттарнă ĕçе тин кăна туртса кăларă. Ăна чи малтан вулаканĕ А. Алексеев чĕлхеçĕ пулнă. Вăл хакласа 1985 çулта Вишневскаяна тӳрех кĕнеке издательсвине тĕллесе янă. Хăй çапла çырса панă: К. И. Вишнвская чăвашсен çĕнĕ çыравçи пуласси куçкĕрет, «Вĕре çĕлен» пьесине вуласа тухмасăр чун чăтмарĕ, унта камичĕ те, трагедийĕ те пур, анчах сцена йĕркине пĕлменнипе хăш-пĕр вырăнсем

камитлĕрех пулса тухнă. Тен, çавна сиссех-и Клавдия Ивановна сăвăсем хайлама пуçланă. Вĕсем вара аван пулса тухнă. «Паянах пичетлеме юрăхлă, анчах хăш-пĕр çĕрте сăвă техники çитменни палăрать», –тенĕ Ю. Айдаш поэт поэзи секцин ертўçи. Çавăнпа та К.Вишневскаяна В Тимаков поэт– консультант чĕлхе енĕпе вĕренме университета кайма хушать. Пĕрисем çапла каланă, теприсем çапла тунă. Усси пысăк, пĕчĕк мар. Иккĕмĕш диплома куç хывать К. Вишневская, малтан суйласа илнĕ техника çулне пăрахсах, филологи енĕпе вĕренет. Вăл енĕпех аспирантурăра вĕренет, ача-пăча поэзийĕпе диссертаци çырать.

Мĕнрен пуçланса мĕнпе вĕçленет-ха трагеди? Тўрех каламалла, йывăр пурнăçран. Чăваш чухăнĕн урăхла пулма та пултараймасть. Анчах инкекĕ те вĕсенех пырса çапать. Унтрисен ўссе çитнĕ ывăлĕ вилет, кĕçĕн хĕр ачи те аран килет тĕнчене: ăна çуратас тесе амăшĕ вилсе чĕрĕлет. Автор хăйне евĕр çырса кăтартма пĕлни, чăваш чунне патвар сăнарпа çеç мар, кăра пулма пултарассине те кăтартса парать. Темĕн пек хисепленĕ çын пулин те тĕшмĕше ĕненсе, вилсе чĕрĕлнĕ çын ырра мар тесе, кăшт кăна çапса вĕлермеççĕ чухăнсем Ульянана. Кунта ялти пуп укçашăн чухăн маррисене усрамалли çинчен калать. Пачăшкă Унтри арăмне вĕлерме ирĕк памасть. Вĕсем иккен чухăнах мар, килĕнче арман та пур, укçине те тума пĕлеççĕ, чухăн кўршисемпе те аван пурăнаççĕ, чиркĕве те самаях пулăшу параççĕ.

Çапла вара çĕр çине вилсе чĕрĕлнĕ тулли хĕрарăмран Сони çуралать. Ăна вырăс манашкисем часах çуралайманран çывăракан хĕр тесе çапла ят параççĕ. Малалла çак хĕрĕн пурнăçĕн сăнарĕ урлă пĕтĕм чăвашлăха курма пулать.

Автор хайĕн стильне тупса литературăра паллă вырăн йышăнасси куçкĕрет. Тăватă пайлă трагеди çырма çăмăл мар, çавăн па та хăй те нумай ĕçленĕ. Кăра çынсен сăнарне кăтартнă чухне те лăпкăн çеç сăнарлама пĕлет. Чĕр чун – чĕр чунах. Темле те улшăнать имĕш. Çынсем те çаплах. Пуян е чухăнран та килмест иккен. Пĕрисем пĕр çул суйласа илеççĕ те ăна сутмаççĕ, теприсем вара, Кĕтерук пеккисем, хăйсене лайăх пултăр тесе темĕн тума та хатĕр. Ульяна вара пачах та усал çиллĕ çын мар. Кинне пула килтен кайма тиврĕ пулин те, ывăлне каçарма, юратма пĕлет, çавăн пекех Кĕтерук çуратнă ачана та хăй малтан йышăнать. Ывăлне ача кун çутине тухнине те кинне тасатса, ачине йĕркелесе чĕркесе хурсан çеç кĕме хушать. Унччен ăна: «Суккăр пулас тетĕн-им?» –тесе чарать. Ку ĕнтĕ автор сăнарлама пĕлнине кăтартса парать. Çапла терт çине терт куракан чухăн хĕрарăмăн ĕлĕк пурнăçĕ çителĕклĕ пулнă пулин те колхозсем тума пуçласан, арманне те, лашине те туртса илнипе, ун хĕрĕ Сони те пачах çука тăрса юлать. Пиччĕшĕпе инкĕшĕ те чухăнне кура ӳссе çитнĕ хĕрĕн вунулттăрах хура пӳртлĕ Павăла качча тухма тивет.
Унта Павăлăн юн тăванĕсем çук пулин те, хуняма

хаяр сăнарĕ палăрать. Ватă хĕрарăмăн элек сăнарне куратпăр. Ку пирĕн пурнăçра та типлă сăнар, паллах. Анчах К. Вишневсакя ăна хăйнееверлĕ сăнарлама пĕлнех. Автор трагедие пĕр çулпа, ансăр калаçупа кăтартса ăнланмалла сăнарланă. Тĕп геройăн ĕçченлĕхĕпе пĕрлех пысăк нуши пулсан та вăл хăйĕн чун пĕрчĕкĕсемшĕн темĕн тума та хатĕр. Вăл çĕр çывăрмасăр вăрмантан çатрака йăтса вут хутмалли хатĕрлет. Кунĕн-çĕрĕн çĕршер çухрăма лавпа тырă фронта ăсататаь. Вăл чирлесе каять те амăшĕ хăйĕн хĕрĕшĕн çĕр хута юмăça чупать. Ватă Ульяна юлашки пир чĕркине çеç мар, юлашки çăкăрне те унта кайса парать. Вăл темĕн тума та хатĕр, Сонине çеç сывă курасшăн.

Кĕçех Аслă вăрçăн çĕнтерӳ уявне уявлама хатĕрленеççĕ ялтисем. Тĕп персонажăн çеç нимĕнле савăнăç та çук. «Уяв та уяв мар», – тенĕ çĕртенех, ăна ялта хисеплекен çук пулин те, ăна ăнланакан пике чупса кĕрет ун патне. Вăл ырă хыпар пĕлтерет те, кĕçех Павăл Степанпа госпитальте пĕрле выртнине пĕлет. Măшăрне те, хăйне те чыслă усрас тенĕ Сонин вăйлă сăнарĕ вĕçленет. Ку таранччен никама çывăхлатманскер малалла мĕнле пулмаллине пĕлмесĕр: те савăннипе, те хурланнипе, тăнсăр пулса урайне ӳкет. Пăхмасăрах вилменнине туякан каччă юрату юррине малаллах шăрантарать. Вĕçĕ пăшăрханмала пек, анчах каччă сăнарĕ урлă тĕп герой вилĕмсĕр, шанчăклă пулнине туйма пулать.

## Кӳршĕсем

Новелла

К. Вишневская.06– 05 – 2006ç.

Çынна ăспа виçмеççĕ халь. Эпир пурте ăслă. Ухмах çын çук. Пирĕн кӳршĕсем те ăслă çынсем. Эпир варринче пурăнатпăр. Пĕр кӳрши ветврач пулса ĕмĕр ирттернĕ, тепĕр енчи – урай çăвакан. Иккĕшĕн те мăшăрĕсем: ваттин хĕрарăмĕ ватăлса, теприн арçынĕ чирллесе вăхăтсăр çĕре кĕнĕ. Апла пулин те çак старик нихăш енчен те ватăлмасть пулмалла. Кăвак шуçăмлах инке арăмĕ патĕнчен тухать пĕр ирхине. Тепрехинче çывăрса юлнă пулас, тем аран çĕклесе хĕрарăм патне ултă сехетре тин çеç кĕрсе кайрĕ. Çапла вунă çулта вуннă куртăм пулĕ. Мĕн çĕклет вăл? Ма-ха ман курмалла?

Канмалли кунсенче хутшăнатпăр, яла кайсан. Кӳршĕпе лайăх пулмаллине мĕн ачаран ăнланса ӳснĕ те, тем тусан та , нимĕн те ан кала. Çак сăмахсене ачалăха аса илнĕ чухне эпĕ пĕр-пĕрне пулăшмалла, аван пурăнмалла пĕр-пĕринпе тесе тепле персе ятăм. Вăл сăмахсене вунă çултан мана кӳршĕ Вера хĕрарăмĕ аса илтерчĕ.

Пĕррехинче çуркунне эпир çĕнтерӳ уявне яла кайрăмăр. Çитетпĕр те пирĕн сарай айккине çын кĕмелĕх тăпăлтарса шыв тытмалли икĕ флягăна тата ытти инструментсене йăта-йăта кайнă. Стамеска аврине мăшăр хăй тунăччĕ те аври питĕ паллăччĕ, аврине кăларса хăварнă вара. Çĕçси ытти ăпăр-тапăр, сенĕкĕ таранах – купăс каласах

кайнӑ пулмалла, мӗншӗн тесен аттен ӗлӗкхи купӑсне те илсе кайнӑ. Вӑл купӑспа эпӗ ача чухне кӑштах темиҫе ташӑ ҫемми, ик-виҫ юрӑ кӗвви калама вӗреннӗччӗ. Ӑна музей валли тесе упрама лайӑх материалпа сарайне чӗркесе ҫакнӑччӗ.

Нумаях та вӑхӑт иртмерӗ старик (ячӗ кӑна ҫапла темелле, мӗншӗн тесен хӑйӗн ҫӳҫӗ ҫеҫ шап-шурах, ытти енчен хӑйне аван туять) шыв тултарнӑ фляга йӑтса тухрӗ. Тепӗр такран ывӑлӗ (машинӑпа ӗҫлет) тепӗр фляга машина ҫинчен антарма тӑрать те, мана курнипе чарӑнса тӑрать. Пирӗнни пекех: пӗри ҫӗп-ҫӗнӗ – нержавейка, тепри кивӗ – алюминии флягӑсем. Каҫса пӑхмалли ҫеҫ юлать. Сӑмах тупкаласа каҫрӑм та... Пӑхатӑп та флягӑсене кӑвак сӑрӑпа тин ҫеҫ сӑрлам пекки туса хӑйсен палли туса лартнӑ. Палӑртнӑ вырӑна йӑпӑрт самантра ӑҫтан куран? Намӑсӗ ҫук ку кӳршӗн.

Вӑйӗ старикӗн пысӑк. Юнашар тӑма тивсен ҫавӑнтах сана именмесӗрех ыталаса илме те пултарать. Ялта кирлӗ ҫын пулнӑскер, ӑна никам та хирӗҫлеймен. Хӑй ӳснӗ ялӗнчен аякра, Комсомольскинче, вӑл енче тутар ялӗсем те пур-ха та, тен, вӗсемпе пурӑнса хӑюланса кайнӑ, кам пӗлет. Халӗ кунта ҫурт лартаҫҫӗ.

Милиции инспекторӗсем Ҫӗрпӳре хӑйсен ӗҫне тивӗҫлӗ тӑвас тесе тӑрӑшаҫҫӗ-ха, анчах пӗр районти йӗркепех малалла каяймӑн. Вӗсем килсен старик тӳрех тепӗр кӳршисем ҫине йӑвантарчӗ. Унта пирӗн япаласем выртнине пӗлет-ха та, анчах эпӗ



И-43850

вăл хĕрарăма чăрмантарас темерĕм. Çĕнĕ арçын тата унăн, аван мар терĕм. Çакскер çын япалине пырса памасăр илмест тесе каларăм.Тепĕр арçынни те çаплах пулĕ терĕм. Пĕрне курса тепри вĕренет мар-и?

Ку кўршисем те çурт лартасшăн. Пўрт лартни япăх мар-ха, лайăх-ха, анчах кўршĕре çапла çĕмĕрсе ватни аванах-ши?

Тĕлĕнмелли тепĕр çулта тупăнчĕ. Пĕлтĕрхи вăхăталлах çитетпĕр те пирĕн сарай алăкăн ураççине тăпăлтарнă. Ăна кăларма кашни тăватă болта уйрăм пăрса кăлармалла. Вĕсене пăрса кăларма пĕр çĕр çитместех.

Çапла вара купăс чĕркенĕ çитти каялла килсе выртнă, унпа пĕрлех манăн юбкăпа кофта та килнĕ, «толстовкана» та хуман-ши тесе аркатса пăхрăм, çук. Сарайĕнче пĕлтĕрхи йĕрех – кĕнекесене йалт кăларса ывăтнă, йĕркеллĕхе аркатнă, япаласене ытларах çĕрелле илсе пенĕ. Ку хутĕнче 32 çул каялла эпĕ качча тухнă
«ылтăн арча качча кайăнă». Тимĕр кравачьсем те усă курман пирки хуçине кĕтсе илнĕ. Анчах вĕсен «пуçĕсене» пăтраштарса янă. Пĕрин кăвакки, теприн хăмăрри юлнă. Каçхи çутă вăрăсене пĕр пекех кăтартнă пулас. Ăна тепĕр çул ылмаштараççĕ пуль-ха. Ку хутĕнче хăш енчен кĕме шухăшлаççĕ-ши? Тен, купăса та илсе килĕç: патшалăх музейĕ кĕтет,сўс пакли вара килес çук, старике мунча пĕренисене мăклама кирлĕ.

Йĕрке хуралçисем ку хутĕнче те персе çитрĕç, шăнкравлană вăхăтпах. Хăйсен ĕçне пĕлеççĕ вĕсем. Кама шанманни çинчен ыйтса тĕлĕнеççĕ. Эпĕ паллах кӳршĕсене шанмастăп, аякри çын çапла болтсене çĕрĕпе пăрса, хăйраса тăрать пулĕ, çапать те çĕмĕрет. Тата тĕрмере ларнисем çине йăвантарать кӳршĕ хĕрарăмĕ, вĕсене арча кирлĕ пулĕ... Арча йĕп мар, ялти «куç курмансем» те çавăн пысăкăш япалана кураççĕ ĕнтĕ. Симĕс тĕслĕ ик витре шыв кĕрекен кострюле çăпанлă çынна çыхса хунă пек чĕркесе пĕтернĕ хĕрарăм. Çĕнĕ арçынни, Володя, пулăшнă-ши? Ăшне пăхрăм та шăтăк мар, хупăлчипе паллаттăм, хупăлчине пытарнă та, катка хуплашкипе хупласа янă. Мискăна вара çĕр явăк хура изолентăпа яваласа çыхса пĕтернĕ. Çын япалипе савăнас кăмăл пурах-ши вара çак арçынăн та? Вăл инспекторсем çине тӳрех хĕрсе кайса кăшкăрчĕ:

– Вĕсем яла çӳремеççĕ. Эпир хуралçăсем мар!..

Тата ытти те, ытти те. Хĕр арăмĕ вара:

– Хăй кӳршĕсемпе лайăх пурăнмалла тет, хăйсем килмеççĕ те...

Инспектор чăтăмлăн итлерĕ те çырмаллине çырса кайрĕ. Мĕн тăван? Çын совеçне милиционер вырнаçтарса параймасть.

Япали-мĕнĕ мар, çапла кӳршĕсем аван мар хăтланса пурăнни такама та йывăрах пуль. Иккĕленместĕмччĕ-ха, шăтăк мар мискăна çапла саплани мĕне пĕлтерет?.. Ухмах та ăнланать.

## ВАÇЛЕЙ Давыдов – АНАТРИ

Клавдия Вишневскаяна пултарулăх кунне халалласа

Эсĕ çырнă калавсем,
Шăрантарнă юрăсем.
Санăн хаклă парнӳсем
Ырă ĕçӳ хĕрнĕçем.

Чун-чĕреме çĕклени,
Çут çăлтăр пек çутални
Ĕмĕр юлать асăмра,
Юлать Тăван Çĕршывра.

Тавах, сана – хĕр-пике,
Кĕрлет пирĕн кĕреке.

15. 09. 07ç.

## Çунатлă пирĕштисем

Илемлĕ сăнарлăхпа ăнланулăха тытса пыма çăмăл мар. Вĕсене пĕр пек шайра сăнарлас пулсан, кашни пайрăма шыраса пайтах çывăрмасăр пуçа ватса, чуна кăсăклантарса, пурнăç тавра шутласа ĕçлемелле. Çавăн пек пултаруллă çыравçăсенчен пĕри – Арсений Тарасов. «Инçет телей çути» драма та автор пурнăçа аван ăнланса илнине тата пурнăçри илемлĕхе кăтартма тĕрлĕ пайрăм сăнарсемпе ĕçлеме пултарнине ĕнентерет. Ăна витĕмлĕрех тума тĕрлĕрен чĕрĕлĕх элеменчĕсене кĕртет. Чи вăйлă сăнарсенчен пĕри вăл – таса чунри юратăва виççĕмĕш чунпа пайламасăр юратма, ăна упрама пĕлекен, чухлакан, вилсен те чунĕпе хăй юратнă çывăх çынпа юлакан, хаклама пĕлнисĕр пуçне, хăйĕн çывăх çыннине телей тăвас текен – Кĕтрин. Вăл хăйĕн таса чунĕпе кашнинех телей кӳрессе ĕненеççĕ ăна пĕлекенсем. Çав телей яланах унран килес пек те туяççĕ ентешĕсем. Автор çак персонажа пурнăçран уйăрсан та, унăн чунне калле пурнăçах сĕтĕрет: пурнăçра вăл идеал. Кашни таса чунлă персонаж сăнарлă Кĕтрине аса илсе ăмсанать,мĕншĕн тесен телейшĕн çунса хыпкаланакансем хăй çине хăй алă хунă çамрăк хĕрарăм Кĕтрин телейлĕ тесе шутлаççĕ. Унпа тĕл пулма нумайăшĕ ĕмĕтленеççĕ пулин те, вилнĕ герой пур çын куçне те курăнмасть. Çакăн пек виçелĕхпе те автор чи таса чунлисене

палăртма майĕ тупать. Кунта Павлик тата унăн амăшĕ шутланаççĕ. Ĕçкелесе амăшĕ ачан кăмăлне хуçать пулин те ача Кĕтринпе курса калаçас ĕмĕчĕпе савăнать. Анчах автор вилнĕ çынна курăннине ахаль тумасть, пурнăçри пекех ырра марра пĕлтернине систерет.

Телейлĕ пулас тенисем çак çĕр чăмăрĕ тавра çаврăнас пулсан та, юратусăр телейлĕ пулма çуккине ăнланаççĕ. Павликĕн виçкĕтеслĕх телейĕ тăваттăмĕш кĕтесе куçать. Ялти сăпайлă арçын Миккуль çыхăнтарать. Ырă чунĕпе пурне те телейлĕ тăвассишĕн хăй телейсĕр тăрса юлнине те сисмест. Çав-çавах çамрăк арăмне Кĕтрине юратса унран каçару ыйтать. Арăмĕ ача çуратайман пирки Миккуль ют ачана Павлике хисеплĕн пулăшать. Çав вăхăтрах ĕçекен ача амăшне йăпатса пулăшма пултарнине те туять. Çавна пулах киле, Кĕтрин патне, пĕртен-пĕр каç çитеймест, Лисукпа юлать. Ку геройшăн – чăн пысăк чун трагедийĕ.

Автор драмине виçкĕтеслĕ юратуран тăваткĕтеслĕх туса çитерейменнипе телейĕн сăнарлăх шайне виçсе касса кăларма çуккипе ĕнентерет. Çапла вара телей çути те таçта. Таса пулма та йывăр иккен. Лисук ĕçмен пулсан, тен, телей çути аякран курăнмалллаччĕ, анчах ĕçкĕ чирĕ пĕтерет.

Пурнăçра телей çути те курăнмасть имĕш. Миккулĕн те çавах, çынна телейлĕ тунипех телей çути ллĕ пуласшăнччĕ, анчах Турă пўрмен ăна ачапа

йăпанма, хăйĕн çук, юттине те вĕлерет пĕр эрех пички пек геолог.

А. Тарасов драматург телее мăшăрсемпе çыхăнтарса пăхать, анчах телейлисем пурнăçра çуккине асăрхать. Виçĕ хĕрарăмран виççĕшĕн те çемйине телей çути ÿкмест: Кĕтрин капла пулчĕ, Лисук апла чирлĕ, Анфисан вара упăшки тĕрмерен таврăнса малтанхиллех хĕнесрен чунĕ çук. Унăн хĕрĕ Суйкка та, пĕчĕклех çак илемсĕр çемйере нуша курса ÿснĕскер, арçын ача çинчен мар, хĕр ача çуратасси çинчен ĕмĕтленет. Унăн тусĕ те шурă кĕпеллĕ хурăн кăна. Пурнăçа юратнине те Павликпе çыхăнтарать:

– Павлик, сана Миккуль тете юратать. Эсĕ телейлĕ, эппин. Манăн атте тĕрмерен ... Эпĕ телейсĕр. Телей – пысăк юрату.

Вăл Павлике тата Кĕтрине курса тĕлĕрет – апла вилĕм çывăхрах-мĕн.

Çăлтăрсен çутипе çеç телейлĕ пулма çуккине те автор Миккуль юррипе çирĕплетет.

Инçет çăлтăр çути.
Ай, мĕн çути?
Эпир курнă телей
Ай, çути.
Инçет çăлтăр мĕн-ма çаплах çунать?
Пире çул кăтртса çаплах çунать.

Çапах та автор шанчкĕ пысăк. Вăл ăна Миккуль кăмăлĕ урлă палăртать. Ĕçлесен, тăрăшсан шанчăк хĕççи хăй ĕçнех тăвасса шанать Миккуль те.

Ҫапла вара телей ҫутине ҫеҫ хӑваларӗ пулать Миккуль, анчах чӑн-чӑн телейӗ ӑҫта-ши? Автор ӑна ҫирӗплетсе калама хӑяймасть пулин те, сӑнарлӑхпа кӑмӑла туптанӑ геройсене ҫылӑха кӗнисемпе телей мар, ҫутине те кураймасса палӑртса тӑрать. Тӑванлӑхри юратура та тасалӑх кирлине ӗнентерет ҫыравҫӑ. Ҫылӑхлӑ вырӑнта телей ҫути те курӑнмасть иккен. Тӳпере вара ҫунатлӑ пирӗштисем вӗҫеҫҫӗ.

Арсений Тарасовӑн тӗп сӑнарӗсене илес пулсан, авторӑн кӑмӑлне аса илтереҫҫӗ: вӗсем хирӗҫмесӗр, килӗштерсе ырӑ патне туртӑннине пула конфликтность пулмасӑрах кам мӗнле пурӑннипе сӑнара уйӑрма пулать. Геройсем пурнӑҫра кирек ӑҫта та хӑйсене лӑпкӑ тытаҫҫӗ. Ытларах романтиккӑллӑ ытамлӑх илӗртет. Ӗмӗтленсе те шанса пурӑнакансем ҫеҫ романтика туйӑмне туйма пултараҫҫӗ, тӳпере пирӗшти пек ҫунатланса вӗҫеҫҫӗ.

22 - 12 - 2001.

## *Повесть повестить – душу навестить*

Мир будет счастлив только тогда,
когда у каждого человека будет душа художника.
Огюст Роден

Человек прекрасной души всегда как Бог хочет и желает себе подобному добра и везения, но этого хотеть только очень мало: за это надо бороться и добиваться. И само себе ничего никогда не приходит, не только у художника, но и у писателя. Чтобы быть настоящим писателем как Владимир Кузьмин и написать такую живописную повесть «Чувашская красавица», остается только помечтать.

«В то время, конечно, задыхающийся в дымном чаду и поте лица в кузнице отец, убирающая за деревней махорку мать, строивший школу из старой церкви дедушка представления не имеют, наверное, что их Микулай находится в Канаше. А братишка Васюк, рвущийся к пацанам на улицу, пожалуй возится с сопливыми Укахви и Антуном. Ведь мать именно Микулаю наказала строго следить за ними, но тогда она не знала еще о тайной задумке сына. Если бы догадалась, взяла бы с собой. Микулай перехитрил ее, ссылаясь на головную боль. Мать пожалела его, что от запаха махорки мальчику станет еще хуже. вечером, когда прочитают им оставленную записку на столе, они спохватятся. Но в это время Микулай будет далеко от села. Попробуйте его догнать! Ишь на какой скорости

мчится он! Впервые севший на поезд, он до глубины души рад. Все время без устали глядит в окно.»

Вот таким литературным языком излагает автор настоящую повесть о настоящем художнике из далекого села от центрального города Чувашии. Прозаику удалось раскрывать образ душевного художника, вышедшего из Чувашии, используя разные методы и способы литературные, умеючи показывал главного героя повести Микулая Караваева.

Бедная жизнь в селе на глазах меняется благодаря умелым людям, которые не думают о себе и не мечтают о спокойной жизни в городах, а хотят чтобы искусство развивалось и в селах. С этим стремлением живет и учится сначала в Чебоксарах, потом в Москве будущий художник из Вурнарского района, села Янгорчино. Если герой повести вырос в лаптях, то в восьмидесятых годах двадцатого века деревни Чувашии начали сравняться с городами. С высшим образованием работает трактористом другой персонаж. История и география для повести тоже нашли место. Где читатель по пути своего чтения находит не мало интересных фактов и названий рек и деревень с национальным колоритом. Менталитет Чувашии не исчезает, поэтому принципиальный, старательный человек с вольной, крепкой душой, весьма с мала непринужденно закаляется в деревне. Он всегда стремится достичь лучшего и всегда готов

поделиться с родными сельчанами где бы и как бы далеко от них не находился. Так и главный герой повести Микола Караваев. Он не только думает о них не забывая родных и близких, но и его работа – картины связаны с сельским человеком и пейзажем. И что он мог достичь в своей работе заветной цели только благодаря своей стремительности и показать как красиво все, что связано с чувашами. Даже девушки Чувашии необычны. Они не красятся в селах, но красота неописуема, так и тянут художника нарисовать «Мадонну земли – чувашскую красавицу», которую на московской выставке светилы изобразительного искусства сравнивают «Джокондой» Леонардо да Винчи. Картина удалась – как спелое яблоко. Теплые глаза, правильные брови, нос, маленькие губы, гладкое лицо – все это показывает целеустремленность, преданность и честность чувашки. Также на голове имеется васильковый венок, который придает картине дополнительный вид, что чувашка сельская связана с цветами хлеба, ржи.

Человек искусства всегда необычный. И в повести В. П. Кузмина талантливый художник не похож на других: он, всегда стремясь делать дорбо, думает как бы своим сельчанам показать «Третьяковку», что не малым трудом достигает этого желания. В доме культуры также открывается сельский народный театр, который имеет важное значение для понимания искусства своего народа.

## Чăнлăхăн вăйĕ пысăк

Пĕчĕк хуранăн пăтти тутлă. Пĕчĕк калавра пысăк шухăш уҫса проблемăсене кăтартма никама та ҫăмăл мар. Аркадий Петрович Казанов тӳрĕ пуплевпе тарăн шухăш хускатать, чăнлăх сăнарĕпе ҫӳҫе вирелле тăратать, вулакана шухăшлаттарма пĕлет. Кирек епле ҫын сăнарне илес пулсан та, авторăн ĕҫĕнче вĕсем тĕрлĕ енлĕ пулин те, кашни хăй тĕслĕ – пĕр пĕтĕмĕшле чăнлăх: расна тум, урăх чĕлхе. Ахаль тĕс мар: тумĕ пурнăҫ стилĕпе майлă, хайлавĕ – пурнăҫран илнĕ чăнлăх чĕлхи. Кам мĕнле ĕҫлеме, ҫырма пултарать, ҫапла ĕҫлет паллах. Аркадий Казанов суйласа илнĕ ҫул вăл – реализм меслечĕ. Ку мелпе ҫырма ҫăмăл мар пулин те, унăн сăнарĕсем илемлĕхпе те, чĕрĕлĕхпе те вулакана илĕртеҫҫĕ, малалла вулас кăмăла сӳнме памаҫҫĕ. Пурнăҫра курма тӳр килнĕ сăнарсем тепĕр хут сан пурнăҫа, ĕмĕте кĕме васкаҫҫĕ. Ҫапла тӳрĕ те тикĕс, кĕске те чĕрĕ ҫырма пултаракан прозаикăн ĕҫĕсем нихăҫан сӳнмен вут пек яланах ҫулăмлă, ҫавăнпа та ҫын тапхăрне, сăнарне – чăнлăхне курма ӳкерчĕклĕ.

Акă илер-ха: Вокзалта е автобус ҫинче, е ялта, е хулара... Сăмахран кинеми калаҫăвĕнче мĕн чухлĕ терт, ҫамрăккин вара пачах урăхла, ĕҫекеннине нимех те кирлĕ мар – пĕр ...

Чипер пурăнас тĕкен ҫынăн ҫеҫ шухăшĕ те, проблеми те пысăк. Кинеми калаҫăвĕнче ял тертне куратăн: ҫамрăксем ĕҫсĕр ҫапкаланса ҫӳрени,

ватăсене хисеплеменни, тумтире чипер тăхăнманни карчăка канăç памасть. Социализмри пĕрпеклĕх пур енчен те улшăннă – пурнăç та пачах урăхла. Пĕр пек мар ку никамшăн та. Пăсăлса кайнисемшĕн пĕр пурнăç, тăрăшаканнисемшĕн тепĕр пурнăç пуçланнине туятăн. Реалист ўкерчĕкĕ чăнне килет.Пурнăç çынăн хăйĕн аллинче çеç пулнине асăрхатăн. Уншăн никам та нимĕн те тумасть. Хăйĕн çинчен шутлама пĕлмен çынна ĕнерхи социализмра пулăшнă пулсан, паянхи кунра вăл тискерле ирĕклĕхре. Çын хăйне çунтарса кĕле тухма та ирĕклĕ. Хăйне никама кирлĕ мар пек туять. Ыран, тен, урăхла пулма пултарать. Анчах паянхи чăнлăх этеме урăхла курасшăн: ыррине унран ытларах кĕтеççĕ. Çавăнпа та çыравçăн произведенийĕсенче геройсем е пĕчĕк çеç персонажсем путлĕ тĕлĕк те тĕлленмеççĕ. Тен, ыранах вĕсен тутлă тĕлĕк пулĕ, анчах чăнлăх мелĕ паянхи тўрĕ кĕтесре – реалист мĕнле курать, çапла çырса сăнарлать.

Писатель журналист пулса ĕçленĕ май чăнлăх мелне ытларах кăмăллать, çавăнпа та унăн сăнарлăхĕ – пурнăç ўкерчĕкĕ яланах чĕрĕ те витĕмлĕ пулса тухать.

27.08.07ç.

*Тупмалли*


1. Тумлампа танлаштарнӑ кӑмӑл 04 – 05
2. Шĕкĕ шăхăрсан 05 – 08
3. «Ҫутă шанчăкăн хĕлхемĕ» 09 – 11
4. Калăплă калавсемпе трагеди 12 – 15
5. Кӳршĕсем, новелла 16 – 19
6. В. Давыдов – Анатри 20
7. Ҫунатлă пирĕштисем 21–24
8. Повесть повестить – душу навестить 25 - 27
9. Чăнлăхăн вăйĕ пысăк 28 - 29

20.00

*КЛАВДИЯ ИВАНОВНА ВИШНЕВСКАЯ*

*Необходимые острые образы*

Кирлĕ çивĕч сăнарсем

*КРИТИКА* *Книга №3*

*Статьи на русском и чувашском языках*

*Компьютерный набор Вишневского В. Д. и автора*

*Компьютерная верстка автора*

Подписано в печать 15.09.2007.
Бумага офсетная.
Гарнитура Arial Cyr. Заказ №655. Печ. л. 2,5.

г. Чебоксары